

Ӳссен кам пуласси пирки пирĕнтен кашниех пĕчĕк чухнех пуç ватма тытăнать. Аслă классенче хамăр каяс вĕренӳ учреждениние суйлама пуçлатпăр. Пĕрисем ют хулана талпăнаççĕ, теприсем тăван республикăрах юлаççĕ. Чăваш Енри аслă шкулсенчен пĕри, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ, уçăлнăранпа кăçалхи çурла уйăхĕнче 50 çул çитрĕ. Сумлă юбилее палăртакан университет ректорĕпе Андрей Александровпа вĕренӳ заведенийĕн ĕнерхи ĕç-хĕлне, паянхи талпăнăвне, малашлăх ĕмĕтне тишкертĕмĕр.

**Тивĕçĕ – чун киленĕçĕ те**

**— Андрей Юрьевич, этемшĕн 50 çул — пĕлтерĕшлĕ тапхăр. Ку вăхăтра пирĕнтен чылайăшĕн ачисем ӳссе ура çине тăнă, çав вăхăтрах вăй-хал та тапса тăрать. Вĕренӳ учрежденийĕшĕн çур ĕмĕр мĕнлерех тапхăр-ши?**

— Çул пирки каласан çур ĕмĕр, чăн та, нумаях та мар. Уйрăмах — вĕренӳ учрежденийĕшĕн. Тĕнчери малтанхи университетсем темиçе çĕршер çултине шута илсен пушшех те. Пирĕн вĕренӳ учрежденийĕн çулне кĕçĕн класри ача çулĕпе танлаштарма пулать. Пуçламăш шкулта вĕренекен-сен ӳсĕмĕнче кăна пулин те Чăваш патшалăх университечĕ сулмаклă утăмсем тума ĕлкĕрчĕ, çĕршывăн вĕрентӳ тытăмĕнче те ăна пĕлеççĕ. Пирĕн аслă шкул Мускаври энергетика институчĕн Атăлçи филиалĕн никĕсĕ

çинче /ăна вăл вăхăтра А.А.Федоров ертсе пынă/ уçăлнă. Тĕрлĕ çулта университета С.Ф.Сайкин, П.А.Сидоров, Л.П.Кураков, В.Г.Агаков тивĕçлипе ертсе пынă.

**— Сирĕн биографие тишкерсен кун-çулăр И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУпа тачă çыхăнни курăнать, кунтах вĕреннĕ, ĕç кĕнекинчи пĕрремĕш йĕркене те кунтах çыртарнă. Апла пулсан çак вĕренӳ заведенийĕ сирĕншĕн çывăх. Университет та сирĕн куç умĕнче улшăннă…**

— Университетпа 1983 çулта çывăхлантăм. 2 çул хĕсметре пулнине тата республикăн Патшалăх Канашĕнче 2 çул ĕçленине шута илмесен вĕçĕмех кунта: студент, преподаватель, ректор. Маншăн кунти тивĕçĕм — ĕç те, чун киленĕçĕ те. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80- мĕш çулĕсенчен пуçласа паянччен çĕнĕ корпус нумай тунă, çĕнĕ факультетсемпе кафедрăсем уçăлнă, студентсене саманапа килĕ-шсе тăракан вĕренӳ стандарчĕсем тата технологийĕсем ыйтнă пек ăс пама пуçланă, ĕçпе тивĕçтерекенсемпе çыхăну тытасси самай урăх шая куçнă.

**— Ректор пулма сире 2014 çулхи кăрлач уйăхĕнче çирĕплетнĕ. Пĕтĕм Раççейри «Студентсен активĕ» конкурсра пĕлтĕр «Çулталăк ректорĕ» пулса тăтăр. Тĕрлĕ шайри чыслава, хисеплĕ ятсемпе наградăсене епле йышăнатăр?**

— Лăпкăн тата философла. Патшалăх е общество наградисемпе хисеплĕ ятсене тивĕçме, паллах, чыслă та кăмăллă. Вĕсене илекенсен хăйсене тĕрлĕ çĕрте кăтартма тивет. «Çулталăк ректорĕ» ята илме мана студентсем «Ректор — студентсен тусĕ» номинацире сĕннĕ. Кун пирки эпĕ кайран çеç пĕлтĕм. Çамрăксемпе ялан пĕрле пулма тăрăшнă май спорт лапаменче, ЧПУн культура çуртĕнче, ытти çĕрте вĕсемпе курнăçатăп, калаçатăп, савăнăçĕ-пăшăрханăвне итлетĕп.

**— Студентсем хăйсем пуçарнă терĕр те — унашкал хăй тĕллĕнлĕхе епле хаклатăр?**

— Паянхи студент — ыранхи специалист. Унăн хушнă ĕçе çеç туса лармалла мар, пуçарулăх кăтартмалла. Ун пеккисене производствăра та юратаççĕ. Усăллă, лайăх, ырă сĕнӳ пама пултарсан пушшех хаклаççĕ. Эпир те хамăрăн хастар студентсене пур енлĕн хавхалантаратпăр.

**Ӗҫleme те хӑнӑхаҫҫӗ**

**— Университетӑн юлашки ҫулсенчи пӗлтерӗшлӗ ҫитӗнӗвӗсенчен хӑшне уйрӑммӑн палӑртнӑ пулӑттӑр?**

— Партнер-предприятисемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлессине вӑйлатрӑмӑр: халӗ пирӗн никӗс кафедра — тӑваттӑ. Электроаппаратура заводӗнче, «ЭКРА» предприятире, «Кей-системс» IT-фирмӑра, «Миконт» трактор завочӗн конструктор подразделенийӗнче вӗрентӳ класӗсем пур. Унта студентсем производствӑра ӗҫleme хӑнӑхаҫҫӗ. Эпир Раҫҫей шайӗнчи темиҫе гранта ҫӗнсе илтӗмӗр, федераци укҫине тивӗҫсе инжиниринг центрне уҫрӑмӑр, нефтьпе газ кӑларакан промышленноҫ валли ҫурҫӗр сиввине чӑтакан резина кӑларма В.И.Чапаев ячӗллӗ пӗрлешӳпе 99 миллион тенкӗ субсиди илтӗмӗр. 2016-2017 ҫулсенче медицина факультечӗ валли Симуляци вӗрентӗвӗн тата аккредитаци центрӗсене уҫрӑмӑр. Вӗҫмелли аппаратсем валли электрон хатӗрсен лабораторине «Элара» производство пӗрлешӗвӗпе пӗрле йӗркелерӗмӗр. Регионсем, оборона промышленноҫӗ валли кадрсем хатӗрлеме конкурса хутшӑнса укҫа тивӗҫме пултартӑмӑр. Ҫӗршыври чи укҫаллӑ фондӑн, Раҫҫейӗн наука фончӗн, гранчӗсене пирӗн республикӑра Чӑваш патшалӑх университечӗ ҫеҫ ҫӗнсе илнӗ.

**Хамӑр патра паха пӗлӳ илччӗр**

**— Патшалӑхӑн пӗрлехи экзаменне тытма пуҫланӑ хыҫҫӑн шкул пӗтерекенсем валли урӑх регионсенчи — Мускаври, Питӗрти, Хусанти — сумлӑ аслӑ шкулсене кӗме ҫул уҫӑлчӗ. Ҫамрӑксене хамӑр патрах хӑварас тесен мӗн тумалла?**

— Ҫӗршыври тата чикӗ леш енчи ят-сумлӑ вӗренӳ учрежденийӗсенче пӗлӳ илме ӑнтӑлни — ҫын хӑйне сума сунине палӑртакан йӗркеллӗ пулӑм. Юта талпӑнакансем пирки начар калаҫма ирӗк ҫук. Тивӗҫӗмӗр — хамӑр регионта та паха пӗлӳ парасси, ӗҫе вырнаҫсан специалистсене тивӗҫлӗ шалу тӳлесси. Аякка тухса каякансем ҫӗршывӑн кирек хӑш кӗтесӗнче те пур, унран тӗлӗнме кирлӗ мар.

**— Паха пӗлӳ терӗр те, ӑслӑ-тӑнлӑ та пултаруллӑ студентсем вӗрентсе кӑларас тесен**

**преподавательсен пĕр вырăнта тăпăртатмалла мар, вĕçĕмех аталанмалла, темиçе теçетке çул каялла пĕлӳ илнипе çырлахни вырăнсăр…**

— Аслă çулти преподавательсене, университет йĕркеленнĕ вăхăталлах ĕçлеме пуçланисене, питех те хаклатпăр. Вĕсем преподавателĕн пысăк шайри культурине паянхи куна çитерме пултарнă. Сумлă ĕçченсене çамрăк преподавательсене наставник пулса ăс пама ыйтатпăр та çак тивĕçе чунран пурнăçлаççĕ. Никĕс наукăсене — математикăна, физикăна, химие — вĕрентесси унччен-хиллех юлнă. Çав вăхăтрах квалификацие ӳстерсе пымаллине пирĕн преподавательсем аван пĕлеççĕ. Уншăн таçта аякка кайма кирлĕ мар — хамăр республикăрах хими, электротехника тата ытти хăш-пĕр отрасль вăйлă аталанать, унти çĕнĕ технологисемпе çăмăллăнах паллашма май пур. Çамрăксене хавхалантарма эпир ятарлă программăсем йĕркелерĕмĕр. Унта хутшăнакансен шалăвĕ те икĕ хут пысăкрах.

**— Аслă шкулăн малашлăх планĕсенчен хăшĕ чи малтан пурнăçламалли?**

— Самана таппине туйса ĕçĕмĕре çĕнĕлĕхсем кĕртсе пымалла. Паянхи кун интерактивлă тата дистанци мелĕпе вĕрентессине йĕркелемелле. Патшалăх управленийĕ, юриспруденци тата ытти хăш-пĕр дисциплинăна теори мелĕпе те ăса хывтарма май пур. Ку енĕпе ĕçе пуçларăмăр-ха, çапах малашне ăна татах вăйлатса, специальноçсене аталантарса пымалла. Университета килмесĕрех вĕренни иккĕмĕш аслă пĕлӳ илекенсемшĕн, квалификацие ӳстерекенсемшĕн, ĕçлекенсемшĕн, аякра пурăнакансемшĕн уйрăмах меллĕ.

**— Аякрисем Чăваш Ене вĕренме килеççĕ-и?**

— Пирĕн университетра çĕршывăн 69 регионĕнчи 17 пине яхан тата 45 ют çĕршыври 1400 çамрă
к п
ĕ
лу пухать. Апла пулсан, ЧПУра 46
çĕ
ршывран в
ĕ
ренекен п
ĕ

л
ÿ
илет.  Мĕнпур студентран 15–20 проценчĕ – ытти регионсенчен.
Кÿршĕллĕ Мари Элпа Тутарстанран пуçласа çурçĕртен тата Чукоткăран килнисем те пур. ЧПУна вĕсем тĕрлĕ сăлтавпа суйлаççĕ: пĕлĕшĕсем е тăванĕсем ырланăран, аслă шкул Раççейри вĕренÿ заведенийĕсен сумлă йышне лекнĕрен, çывăх çыннисем пирĕн республикăра пурăннăран… Кирек епле учрежденин те малашлăхĕ — унăн çыннисем. Пирĕн коллектив — пĕрремĕш курс студенчĕсенчен пуçласа тăнлавне пас тытнă, пысăк опытлă профессорсем таранах. Вĕсене пурне те малашлăха шанса пăхма, вĕренÿре тата ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума çирĕп сывлăх сунатăп. Йыш пулсан университет та аталанĕ.

{gallery}novosty/2017/10/13102017_3{/gallery}

**Вера ЭВЕРККИ калаçнă.**

**Андрей ДОБРЫНКИН сăн ÿкерчĕкĕсем.**